Республика кунне хатĕрленсе

Тавралăх тирпей-илемĕ хамăршăнах

Мартăн 29-мĕшĕнче район центрĕнче вырнаçнă предприятисемпе организацисен, учреждენисен, пĕчĕк бизнес предприятийĕсен ертӳçисене «Моргаушскагропромснаб» предприяти çывăхĕнче район пуçлăхĕ пухнă. Калаçу унта тавралăх тирпей-илемĕ, тасалăх, Республика кунне хатĕрленессипирки пулнă. Пухăннисем район центрĕнче тĕрлĕ вырăнсене çитсе курса кая хăвармасăр татса памалли ĕçсене палăртнă.

Çак кунсенче район хаçачĕн сотрудникĕ район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕпе, капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕпе Владимир Германович НИКТИНПА тĕл пулнă, Республика кунне хатĕрленсе кĕтсе илессипе туса ирттермелли ĕçсем пирки каласа пама ыйтнă.

– Владимир Германович, хатĕрленӳ ĕçĕсем пирки пĕтĕмĕшле мĕн каланă пулăттăр?

– Тĕрĕссипе ку енĕпе татса памалли ыйтусем сахалах мар. Çавна уйрăммăн палăртасшăн. Хăтлă та илемлĕ район центрĕ Республика кунĕ валли кăна мар, хамăршăнах. Тавралăх юртан тасалса пынă май хĕллехи çӳп-çап çиеле тухать. Вĕсене куллен тасатса тăрас пулать. Çакна валли кашни предприятипе организацие, учреждение суту-илӳ предприятине çирĕплетсе панă участоксем пур. Ытти ялсемпе урамсенче те уйрăм çынсен тасалăх, тирпейлĕх ыйтăвĕсемпе ытларах тимлемелле. Вырăнсенче ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен, старостăсен, депутатсен ку енĕпе пуçарулăрах пулас пулать.

– Республика кунне районта уявланă май мĕнле пысăк пĕлтерĕшлĕ мероприятисене палăртса хăварас тетĕр?

– Паллă ĕнтĕ, Республика кунне районта ирттерессипитĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пулăм пулса тăрать. Уйрăм çынсем çине тăнипе кăна кунта ниепле те май çук. Пурин те ответлăха туйса хăйсенчен мĕн килнине пĕтĕмпех тума тăрăшас пулать. Çак пысăк уява паллă тума килекенсен асĕнче Муркаш районĕ малашне чи ырă туйăмсене кăна çураттăр темелле.

Тĕрĕссипе Республика кунĕ умĕн те, ун хыççăн та районта пулса иртекен мероприятисем, ĕçсем ытларахăшĕ çак пысăк уявпа çыхăннă. Пĕлтерĕшлĕ мероприятисенчен çаксене асăнса хăварнă пулăттăм. Акă майăн 19-мĕшĕнчех ĕнтĕ пирĕн ентеш, чăвашсен пĕрремĕш профессорĕ, этнографĕ, «Хыпар» хаçат никĕслевçи Н.В. Никольскийăн çуралнăранпа 130 çул çитнине уявлама пăхнă. Июнĕн 21–22-мĕшĕсенче Раççей Геройĕ Евгений Борисов ячĕпе Муркашра мини-футбол енĕпе ăмăртусем иртмелле. Июнĕн 23-мĕшĕнче «Волга» – «Гигант» хуçалăхĕн тĕп усадьби – Мăн Сĕнтĕр – Шашкар çула уçмалла. «Сеспель» хупă акционер обществин çĕнĕ производство комплексĕ те çав кунах хута каять. Муркашра «Муркаш районĕ: унчченхи тата хальхи» фотовыставка уçăлать. Картингистсем хăйсен пултарулăхне кăтартаççĕ. Июнĕн 23-мĕшĕнчех Шетмĕпуçĕнчи врач амбулаторийĕн бази çинче пĕтĕмĕшле практика врачĕн офисĕ ĕçлеме тытăнать.

Июнĕн 24-мĕшĕнче район центрĕнче савăнăçлă лару-тăрура физкультурăпа спорт комплексне уçма палăртнă. Халăх пултарулăхĕн маçтăрĕсен çемье пултарулăх фестивалĕ те çав кун иртет. Кашмаш ялĕнче вара Çатракасси ял тăрăхĕн базăллă культура учрежденийĕ ĕçлеме тытăнать.

– Халĕ район центрĕ патне таврăнар. Уявăн тĕп мероприятийĕсем кунта иртмелле вĕт-ха.

– Çавна палăртса хăварнă пулăттăм. Район центрне тирпейлĕ, илемлĕ, хăтлă тăвасси пĕр кунхи ĕç мар. Куллен тата кашнин çине тăрас пулать. Акă иртнĕ эрне кун Муркашри пур предприятисемпе организацисенче, учреждენисенче ĕçлекенсем те субботника тухрĕç, тавралăха тирпей-илем кĕртессине ĕçлерĕç. Ĕçленин усси курăнмасть мар. Малашне кашни эрнерех кун пек субботниксене йĕркелес пулать. Çӳп-çап, тасамарлăх хĕлĕпе сахал мар пухăннă. Пĕтĕмпех халĕ вăл çиеле тухать. Çапах та тумалли ĕçсен калăпăшĕ вара пĕчĕк мар-ха. Кунта чи малтанах Октябре 50 çул урамри нумай хваттерлĕ 44 тата 44 «а» çуртсен картишĕнчи йĕркесĕрлĕх канăçсăрлантарать. Çак çуртсенче пурăнакан çынсен хăйсем пĕлнĕ пек вырнаçтарса тухнă сарайĕсене пăсас ĕçсене пуçарнă пулин те, лав вырăнтан ерипен хускалать. Пурте сарайсене пăсса территорие тирпейлеме майсем туса пама васкамаççĕ. Вăхăчĕ вара иртет. Сарайсене пăсса пĕтерсен унта ача-пăча площадки йĕркелеме пăхнă.

Ватă йывăççене касассине, йывăççен тураттисене иртессине йĕркеленĕ. Апла пулин те ку ĕççене вĕçлемен-ха.

Тĕп урамсенче вырнаçнă предприятисен, организацисен, суту-илӳ предприятийĕсен çурчĕсен умĕсене юсаса йĕркене кĕртсе çитермелле, сăрламалла, çĕнетмелле. Кунта пĕрлех нумай хваттерлĕ çуртсен чӳрече рамисене пурне те пĕр пек тĕспе сăрласа тухма палăртнă. Кун пирки пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн ертсе пыракан компанийĕпе килĕшӳ тунă.

Кунпа пĕрлех тĕп урамсенче уйрăм çынсен çурчĕсем те вырнаçнă. Вĕсене те уяв сăнĕ кĕртесех пулать. Картишсене юсассине те, сăрлассине те кая хăвармалла мар. Вĕсене пĕр тĕслĕрех сăрласан вара хăтлăрах та илемлĕрех пулĕ кăна. Хăш-пĕр çуртсене хуçисем вăхăтлăх пурăнакансем те пур. Ку çуртсем пирки те ыйтăва татса парас пулать.

Çуртсем çинче хальхи вăхăтра телевидени антеннисем эрешмен карри пекех хунаса кайнă. Тĕм тĕрли те пур. Тĕрлĕ çĕрте тĕрлĕ çӳллĕшĕнче вырнаçтарнă вĕсене. Кунта та йĕрке тумалла пулать.

– Район центрĕнчи хăш-пĕр урамсенче йĕркеллĕ çулсем çукки вăрттăнлăх мар. Вĕсене юсама пăхнă-и?

– Чапаев, Ленин, Советская урамсенче, Çĕньял Муркаш ялĕнче çулсем тумалла. Ку ĕçсене плана кĕртсе хăварнă. Çанталăк майлашăнсан ĕçсем тытăнмалла. Кунпа пĕрлех район центрне пырса кĕмелли çулсене те йĕркене кĕртсе юсав ĕçĕсем туса ирттеретпĕр. Кусем вĕсем Октябре 50 çул тата Гагарин урамĕсем.

– Кăçал та урамсенче чечексем ешерĕç-и?

– Тĕп урамсенче пуринче те чечексем акса-лартса хăварма палăртнă. Çавна валли калчасем хатĕрлессине районти шкулсене шаннă.

– Хальхи вăхăтра район центрĕнче автомашинăсен шучĕ сахал мар. Республика кунне уявланă май вĕсен шучĕ татах та нумайланĕ. Автомашинăсене вырнаçтарма майсем пур-и?

– Район центрĕнче автомашинăсене вырнаçтарма ятарлă стоянка çукки кун йĕркинче çивĕч тăрать. Ку ыйтăва кая хăвармасăр татса парас пулать. Республика кунĕнче вара тĕп урамсемпе автомашинăсене çӳретме чарма пăхнă. Техника хатĕрĕсене юсавпа техника предприятийĕн, Муркаш пасарĕн, Гагарин урамĕнчи 8-мĕш çуртăн картишĕн, Муркаш шкулĕн территорийĕсенче вырнаçтарăпăр. Çавăнпа пĕрлех уяв кунĕнче Муркаш урлă тавра каймалли çулсене те палăртатпăр.

– Владимир Германович, районта ирттерекен çак пысăк уявчен шутлă кунсем юлаççĕ темелле. Çавна май юлашкинчен хăвăртан мĕн каланă пулăттăр?

– Çапла, вăхăчĕ сахалрах та сахалрах, тумалли ĕçсен калăпăшĕ вара пĕчĕкех мар. Çавăнпа та тивĕçлĕ органсен те, уйрăм граждансен те ответлăха çивĕчрех туяс пулать. Районти санитарипе эпидемиологи надзорĕн центрĕн, пушар хуралĕн, шалти ĕçсен пайĕн тата ыттисен ответлăха туйманнисем-ăнланманнисем тĕлĕшпе çирĕпрех мерăсем йышăнас пулать. Укĕтленипе кăна çырлахма юрамасть. Республика кунĕ кашниншĕнех асра юлмалли пысăк уяв пулса тăтăр.

В. ШАПОШНИКОВ калаçнă.

Сăн ӳкерчĕксенче: Октябре 50 çул урамри 26-мĕш çурт çумнех çитрĕç сарайсем; кун пеккине те тĕл пулма пулать халĕ Муркашра.

Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.

Партисен пурнăçĕнчен

Умри тĕллевсем тата пысăкрах

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

– Тухса калаçакансем тата мĕнле ыйтусене хускатрĕç?

– Конференцире питĕ кирлĕ те çивĕч ыйтăва – аграрлă секторти лару-тăрăва тишкерчĕç. Çав шутран килти хушма хуçалăхсем пирки те. Паян ял çыннисене халăхран пуçтаракан сĕте вырнаçтарма йывăрри, хăш-пĕр ялсенче ăна пач та пуçтарманни питĕ пăшăрхантарать. Конференцире район, республика шайĕнче çак ыйтăва татса пама ыйтрĕç. Мĕншĕн тесен халăх паянхи çĕршыври политикăна, туса ирттерекен ĕçсене шанать. Çавăнпах ĕнтĕ, çăмăллатнă кредитсем илсе, 2-3 ĕне тытакансем те пур. Апла пулсан ку проблемăна татса памалла пирĕн, халăх шанăçне чакармалла мар.

Политканаш членĕ Б.В. Андреев та питĕ актуаллă ыйту хускатрĕ: район ертӳçисен суйлавĕсен сĕнĕвĕсене халăх шута илмелле тата çав ыйтусене татса памалли çулĕсене шырамалла. Турай, Анаткасси тăрăхĕнче пурăнакансене ав район центрĕпе Етĕрне районне Анаткасси витĕр çыхăнтаракан çула тăвасси питĕ пăшăрхантарать.

Палăртса хăвармалла, район администрацийĕ ку ыйтупа ĕçлет. Çăмăл мар пулин те, асăннă çула тĕплĕ юсассине кăçалхи çула кĕртсе хăварма май килнине палăртрĕ район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов.

Çакăн пек ыйтусем çĕклени йăлтах парти членĕсем, пуçламăш уйрăм представителĕсем ĕç результатĕшĕн тăрăшнине кăтартса парать. Администраци, предприяти, партин пуçламăш организацийĕсем пĕрле ĕçлессине тимлĕх уйăрни пирки калать. «Единая Россия» партин паянхи влаçпа алла-аллăн тытăнса ĕçлемелли çинчен те. Пур çитменлĕхсем çинчен калаçмалли, вĕсене татса памалли çинчен.

– Альберт Николаевич, партин пуçламăш уйрăмĕн ĕçне мĕнле хакланă пулăттăр?

– Отчетпа суйлав кампанийĕ çакна кăтартса пачĕ. Пур пуçламăш уйрăмсем те пĕр пек ĕçлеймерĕç. Питĕ хастар пуçламăш организацисем те пур. Çителĕклĕ таран ĕçлеменнисем те. Вĕсенчи секретарьсене çĕнĕрен суйлама тиврĕ. Паллах, хăйсем вырăнне çамрăксене хăваракансем те пулчĕç. Йӳçкасси, Ильинка ял тăрăхĕсенчи пуçламăш уйрăм секретарĕсене Г.В. Маноле, Е.А. Волкова ырăпа асăнмалла.

– Паян партин пуçламăш уйрăмĕсене уйрăмах мĕн енĕпе тимлемелле?

– «Единая Россия» политика партийĕн регионти уйрăмĕн ĕçтăвкомĕн ертӳçи Г.Г. Николаева кун пирки хăйĕн сăмахĕнче те палăртрĕ. Паян парти членĕсемпе ытларах тĕл пулусем, вĕренӳсем йĕркелемелле. Пытарма кирлĕ мар, паян нумайăшĕ членлă-сумлă парти билетне илесшĕн тăрăшать. Çавăнпа та парти ретне тивĕçлисене илмелле. Вĕсем хăйсен членлă ĕçĕпе партие çирĕплетме, унăн сумне татах та ӳстерме пулăшчăр.

Каласа хăвармалла, партин районти уйрăмĕнче паян 800-е яхăн парти членĕ. Вĕсем пурте халăхра хисеп çĕнсе илнĕ çынсем: ял ĕçченĕсем, вĕрентекенсем, врачсем, культура ĕçченĕсем тата ыттисем. Паян пирĕн партие производствăра ĕçлекенсене тата ытларах илмелле.

Паян вырăнсенчи хăш-пĕр пуçламăш уйрăмсене вырăнта канăç паман ыйтусене сахал хускатни, вĕсене вĕçне çити татса парас тесе тимлемменни те палăрать. Кун пек тĕслĕхсем пăшăрхантараççĕ. Çав вăхăтрах партин хастар членĕсене, пуçламăш уйрăмсене чĕререн тав сăмахĕ калас килет, мĕншĕн тесен çакă вăл тӳлевсĕр, чĕререн тăвакан ĕç.

– Пирĕн калаçу вĕçленсе пырать. Тата мĕн хушса каланă пулăттăр?

– Конференци вăл мĕн тунипе мĕн тумалланине кăтартса пачĕ. Мĕн тунине пĕтĕмлетрĕмĕр. Çакăнтан пирĕн малалла пурнăçламалли задачăсем тухса тăраççĕ. Партин ĕçĕн результачĕ курăнтăр тесен, парти членĕсемпе вĕренӳсем йĕркелемелле, ĕçе планлама, мероприятисем ирттерме вĕренмелле.

Партин районти уйрăмĕн ĕçтăвкомĕн умĕнче те пысăк задачăсем тăраççĕ. Пирĕн малалла хамăр район территорийĕнче «Единая Россия» парти тăратнă Президентăн программине пурнăçа кĕртме пуçламалла.

РФ Президенчĕн суйлавĕ тата çакна кăтартса пачĕ. Никама вараламасăрах, нимĕнле партие вараламасăрах ĕçлеме пултаратпăр. Оппонентсем, тĕрлĕ партисем пур-пир вара лайăх кăна. Ку вăл йĕркеллĕ пулăм. Çакăн пек условисенче çеç аталанма пултараççĕ партисем. Çав шутра «Единая Россия» политика партийĕ те.

– Тавах, Альберт Николаевич, калаçушăн.

Л.ПАВЛОВА калаçнă.

Чăваш Республикин Президенчĕн Патшалăх Канашне янă Çырăвне пурнăçа кĕртетпĕр

Тренажер залĕ уçăлчĕ

Вăл е ку чир килсе çаклансан, эпир чи малтан мĕн тăватпăр? Больницăна каятпăр. Врач çырса панă эмелсемпе сипленме пуçлатпăр. Ку çапла пулмалла та. Эмелне пĕр-икĕ хут ĕçсенех, больницăра пĕр-икĕ кун сипленнĕ хыççăнах, пирĕн малтанхинчен те çирĕпрех пулас килет-çке-ха тата. Районти медицина сферинче юлашки çулсенче халăхăн сывлăхне сыхлас ĕçре курăмлă ĕçсем туса ирттереççĕ. Иртнĕ çул кăна çĕнĕ «Васкавлă пулăшу» машинисемпе медицина оборудованийĕ 4 млн. та 378 пин (2006 çулта – 5 млн. та 870 пин тенке яхăн суммăлăх) тенкĕ ытларах сумлăх килнĕ. Гепатитран, хĕрлĕ шатраран, полиомиелитран, гриппран наци проекчĕпе килĕшӳллĕн 644 пин ытларах тенкĕлĕх вакцина илнĕ. Кунсăр пуçне федераллă бюджетран тата 178 пин ытларах тенкĕлĕх туяннă вакцинăсене.

Е тата халăха хушма диспансеризаци витĕр кăларнине илер. Иртнĕ çул çапла майпа 1312 çыннăн сывлăхне тĕрĕсленĕ. Çакă чире çийĕнчех тупса палăртса вăхăтра сиплеме пулăшать.

Районти медицина ĕçченĕсем кашни çулах профилактика ĕçне ытларах та ытларах тимлĕх уйăрма пуçларĕç. Халăха гигиена тĕлĕшĕнчен воспитани парассипе тата ку тĕлĕшпе вĕрентессипе районти канаш ĕçлет. Çавăн пекех çемьесене планлас ыйтупа ĕçлекен пӳлĕм те, «Сахăр диабечĕ», «Юн пусăмĕн чирĕсем» шкулсем те йĕркеллĕ ĕçлесе пыраççĕ тата ытти те. Кĕскен каласан, шурă халатлă сывлăх хуралçисем халăх сывлăхне çирĕплетессишĕн хăйсенчен килнине йăлтах тăваççĕ.

Анчах ку кăна çителĕксĕр иккен. Çакна Чăваш Республикин Президенчĕ Патшалăх Канашне янă Çырура та уйрăммăн палăртрĕ. Паянхи кун ыйтакан сиплев учрежденийĕсемпе тата эмелсемпе çеç сывлăха сыхлас ĕçре пысăк результатсем тума çук. Кунта сывă пурнăç йĕркипе пурăнни тата спортпа туслă пулни кирлĕ. Акă мĕнле тĕп шухăш унта. Больница койки çине лекес мар тесен, ăспа пурăнмалла. Чăннипех те, ваттисем калашле, ăспа пурăнсан, имçам кирлĕ пулмасть пулĕ.

Районти тĕп больница ĕçченĕсем сывă пурнăç йĕркипе спорт çирĕп сывлăх никĕсĕ пулнине пропагандăлассă çеç мар, çакна хăйсен ырă тĕслĕхĕпе çирĕплетеççĕ.

Медицина ĕçченĕсем валли спорт залне уçас шухăш малтанах пулнă-ха кунти профсоюз комитечĕн. Больница картишĕнчи малтан сĕт кухни пулнă йывăç çурт пушансан вара профсоюз комитечĕн пуçлăхĕ Г.Н. Кузнецова врач анестезиолог-реаниматолог хăйсен ĕçтешĕсемпе калаçрĕ. Хаваспах килĕшрĕç медицина ĕçченĕсем пушă вăхăта тренажер залĕнче ирттерме.

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ, районти тĕп больницăн тĕп врачĕ В.Г. Данилов ырласа йышăнчĕ хăй ертсе пыракан

коллективăн ырă шухăшне. Вырăнти профсоюз комитечĕ спортинвентарьпе оборудовани валли 35 пин тенкĕ уйăрчĕ, больница администрацийĕ тепĕр 15 пин тенкĕ хушрĕ. Çурта хăт кĕртмелли юсав ĕçĕсене туса ирттерчĕ хыççăн оборудованисене вырнаçтарчĕç. Март уйăхĕнче тренажер залĕ хăйĕн алăкĕсене яриех уçрĕ. И.М. Ярдыков врач-реаниматолог вăл е ку тренажерпа мĕнле усă курмаллине кăтартса пачĕ. Паян вара кунта килме никама та тархасламалла мар.

– Ĕçе иртерех килнисем ĕç кунне çак залран пуçлаççĕ. Кăнтăр апачĕ вăхăтĕнче те пушă тăмасть вăл, – каласа парать тĕп врачăн йĕркелӳ ыйтăвĕсемпе çумĕ Г.Г. Федотова. – Муркашсем вара ĕç хыççăн килеççĕ кунта.

Районти ытти коллективсен медицина ĕçченĕсенчен тĕслĕх илмелли çеç юлать.

Л. ПАВЛОВА.

Сăн ӳкерчĕкре: кунта вăхăт иртни те сисĕнмест. Автор сăн ӳкерчĕкĕ.